**Экономикăпа общество аталанăвĕнче пĕлӳ пĕлтерĕшĕ ӳссех пырать. Çакна шута илсе юлашки çулсенче çĕршывра вĕренӳ тытăмне çĕнетсе улăштарас, пысăк квалификациллĕ специалистсем хатĕрлессине çĕнĕ шая çĕклес тĕлĕшпе курăмлă ĕçсем туса ирттерчĕç. Çĕнетӳ ĕçне И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ те ырласа йышăннине, тĕллевлĕн пурнăçа кĕртсе пынине, ытти аслă шкулшăн тĕслĕх пулнине палăртмалла. Кăçалхи кăрлачăн 25-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕн Правительствин Председателĕ В.В.Путин кунти студентсемпе тĕл пулнă вăхăтра каланă сăмахсем те çакна тӳрремĕнех çирĕплетеççĕ: «Сирĕн университет паллă, тухăçлă, специалистсем хатĕрлес шай пысăк университетсен шутне кĕрет».**

**Республикăри тĕп аслă шкул паян мĕнле сывлать, мĕнле аталану çул-йĕрне мала хурать? Çак ыйтусемпе университет ректорĕпе В.Г.Агаков профессорпа калаçатпăр.**

*В.Г.Агаков Етĕрне районĕнчи Çуткассинче çуралса ӳснĕ. Палтайри вăтам шкултан вĕренсе тухнă, унтан Мускаври М.В.Ломоносов ячĕллĕ патшалăх университетĕнче «Астрономи» специальноçпа пĕлӳ илнĕ. Совет çарĕнче лейтенант званийĕпе хĕсметре тăнă. 1975 çулта Чăваш патшалăх университетĕнче ĕçлеме пуçланă. 1976-1979 çулсенче Мускав патшалăх университечĕн аспирантуринче «Астрофизика» специальноçпа /«Математикăллă астрофизика» специализаци/ вĕреннĕ. 1987 çултан пуçласа паянхи кунччен аслă математика кафедрине ертсе пырать. 1992 çулта никĕсленнĕренпех пулас инженерсен шкулĕн ертӳçи. Тĕрлĕ çулта вăл инженерсен никĕс хатĕрлевĕн факультечĕн, математика факультечĕн деканĕ, тĕнче çыхăнăвĕсем енĕпе, вĕренӳ енĕпе ĕçлекен проректор, 2001-2009 çулсенче университетăн йышăну комиссийĕн яваплă секретарĕ пулнă.*

*В.Г.Агаков профессор - 175 ăслăлăх, вĕренӳ, методика ĕçĕсен /çав шутра 30 ытла монографи, вĕренӳ, справка пособийĕ/ авторĕ, университетра тухса тăракан «Математические модели и их приложения» ăслăлăх сборникĕн никĕслевçи тата тĕп редакторĕ.*

*2010 çулхи кăрлачăн 12-мӗшӗнчен ăна Раççей Федерацийӗн Вӗренӳ агентствин хушăвӗпе И.Н.Ульянов ячӗллӗ Чăваш патшалăх университечӗн ректорӗ пулма çирӗплетнӗ.*

**— Всеволод Георгиевич, эсир университета малалла аталантармалли анлă программа хатӗрленӗ. Унăн тӗп тӗллевӗсемпе паллаштарсан аванччӗ.**

— Вӗренӳ енӗпе илес тӗк пирӗн тивӗç - професси ăсталăхӗпе палăрса тăракан, конкуренцие тӳсӗмлӗ, çӗнӗлле шухăшлакан специалистсем хатӗрлесси. Ăслăлăх-тӗпчев ӗçӗнче - Чăваш Енпе Раççей регионӗсен аталанăвӗшӗн пӗлтерӗшлӗ никӗс тата хушма ăслăлăх тӗпчевӗсем ирттересси. Социаллă пурнăçпа экономика ӗç-хӗлӗнче чи кирли преподавательсене, сотрудниксене, студентсене социаллă хӳтлӗхпе тивӗçтерессине тесе шутлатăп.

Паллах, пурлăхпа техника никӗсне çирӗплетсе пымалла, унсăрăн паха специалистсем хатӗрлеме май çук.

Тата университетра çынлăх туйăмне сарас килет. Пурте пӗр сывлăшпа, университет сывлăшӗпе сывласа, пӗлӗве, вӗренӗве, профессионализма, чыслăха, йӗркелӗхе, кашнине - вăл преподаватель-и, сотрудник-и е студент-и, тирпейлӳçӗ-и - хисеплесе пурăнччăр.

Мӗн авалтанпах кирек мӗнле университет та демократи шайӗ пысăк пулнипе палăрса тăнă. Çавна май эпӗ Тӗрӗслӗхе сасăласа палăртманнине чунран ӗненетӗп. Ăна сӳтсе явса, тавлашса çирӗплетеççӗ. Çак тапхăрта кашниех хăйӗн шухăшне, вăл пуçлăх шухăшӗпе килӗшсе тăмасан та, калама пултарать. Анчах йышăну тунă пулсан ăна кашнинех пӗр сăмахсăр пурнăçламалла. Ку - администрацин ертсе пымалли тытăмӗн тӗп элеменчӗ. Университета ертсе пымалли уçăмлă вертикаль йӗркелемелле - кашни çын хăйӗн тивӗçӗсене уçăмлă пӗлсе тăтăр. Ректор тивӗçне пурнăçлама тытăнсан эпӗ мӗн пур подразделени ӗçне мӗнле йӗркеленипе паллашрăм, ӗç коллективӗсемпе тӗл пултăм. Мӗн палăрчӗ-ха? Сотрудниксенчен хăшӗ-пӗри хăйӗн должноç тивӗçӗсен шутне мӗн кӗнине те пӗлмест иккен.

**— Çирĕпрех ыйтма тивет-тĕр?**

— Кашниех йĕркене çирĕп пăхăнма тивĕçлĕ, хăйĕн участокĕнчи ĕçшĕн ертӳçĕсенчен çирĕпрех ыйтма пуçлатпăр. Ертӳçĕн яваплă, объективлă кăна мар, чăн-чăн профессионал, аналитик, стратег, çĕнĕлле шухăшлакан çын пулмалла. Паян пурнăç пысăк хăвăртлăхпа малалла каять. Енчен те ертӳçĕ çак хăвăртлăха ĕлкĕрсе пыраймасть, çĕнĕлле ĕçлеме вĕренеймест е ӳркенет тĕк çав вырăнта ĕçлеме те пултараймасть. Аталанура кирек мĕнле чарăну та каялла чакнине пĕлтерет. Шел те, пирĕн çĕнĕ технологисемпе туслах мар пуçлăхсем те пур-ха. Çавăнпа кашни подразделени ертӳçи умне çакăн пек тĕллев лартрăмăр - вĕсен вĕренӳ çулĕ вĕçленнĕ тĕле компьютерпа ĕçлеме вĕренсе çитмелле. Пултараймасан должноçран кайма тивет. Тата университета ертсе пырас тытăма автоматизацилес ĕçе пуçăннине те асăнмалла. Ăна университетăн ятарлă ăслăлăх ушкăнĕ хăй вăйĕпе пурнăçлать.

**— Çĕршыври наци тĕпчев университечĕсен иккĕмĕш конкурсне хутшăнни пирки мĕн калама пултаратăр?**

— Çĕнтерӳçĕсен йышне лекеймерĕмĕр. Анчах ку алă усса лармалли сăлтав мар. Конкурс эксперчĕсем питĕ çирĕп ыйтнине, университетсен тĕрлĕ енлĕ аталанăвне юлашки виçĕ çулхи кăтартусем тăрăх хакланине те палăртмалла. Пирĕн ăслăлăх тĕпчевĕсем тĕлĕшпе çитĕнӳсем пур-ха. Конкурса хутшăнни вара хăйне евĕр опыт пухма май пачĕ теме юрать. Малалла ĕçлетпĕр. Нумай пулмасть университетăн пĕчĕк предприятийĕсенчен пĕри Раççейĕн пĕр миллион тенкĕлĕх грантне выляса илчĕ. Пĕлтĕр, Лев Пантелеймонович Кураков ректор пулнă чухне, Ученăй канаш йышăнăвĕпе йĕркеленĕ паха технологисен тата наноматериалсен ăслăлăх-вĕренӳ инноваци комплексĕ хăватсене ӳстерсе пырать. Сăмах май, паян университет президенчĕпе Л.П.Кураковпа алла-аллăн, пĕр-пĕрне пулăшса, федерацин «Аслă тата аслă шкул хыççăнхи професси пĕлĕвĕ çинчен» саккунĕпе тата ЧПУ уставĕпе килĕшӳллĕн тивĕçсене пайласа ĕçлетпĕр.

**— Паян çамрăк специалистсене ĕçе вырнаçма йывăр. Ĕç паракансем вĕсен професси пĕлĕвĕн шайĕ çителĕксĕр тесе палăртаççĕ. Мĕншĕн çапла-ха?**

— Ыйту çивĕчлĕхĕ вĕрентӳ пахалăхĕпе кăна çыхăнман. Теорие практикăпа тĕллевлĕ çирĕплетсе пымалла. Тĕслĕхрен, инженерсем хатĕрлеме лайăх пурлăх никĕсĕ кирлĕ.

Ăна пуянлатма тăрăшатпăр-ха: пĕрремĕш кварталта кăна техника туянма çур миллион ытла тенкĕ уйăртăмăр. Анчах çĕнĕ йышши паха оборудованиллĕ предприятисемпе ăçтан танлашăн? Çавăнпа малта пыракан предприятисемпе студентсене вĕсем патĕнче ĕçе хăнăхтарма килĕшўсем тăватпăр. Пирĕн «ЭЛЕКТРО» холдинга кĕрекен «ВНИИР» акционерсен уçă пĕрлĕхĕпе, «Экра» НПП тулли мар яваплă пĕрлĕхпе çыхăну çирĕп - вĕсен пуçлăхĕсем университет кафедрисене ертсе пыраççĕ, сотрудниксенчен чылайăшĕ вĕрентў ĕçне хутшăнать. Кашни факультетăн çак мелпе анлă усă курмалла, ĕç параканпа специалистсем хатĕрлес ыйтусене пĕрле татса пама тăрăшмалла. Ку тĕлĕшпе малалла ĕçлетпĕр. Çу уйăхĕн 13-мĕшĕнче «Трактор завочĕсем» концерн», «Хурçăн ăслăлăх-тĕпчев институчĕ» акционерсен уçă пĕрлĕхĕ, Чăваш Республикин Промышленноçпа энергетика министерстви тата Чăваш патшалăх университечĕ пĕрле ĕçлесси çинчен тăватă енлĕ килĕшĕве алă пусрĕç.

Тепĕр мел - предприяти е организаци саккасĕпе специалистсем хатĕрлесси. Диплом илнĕ хыççăн выпускник хăйне вĕренме янă предприятие таврăнать, ăна ĕç выранĕпе тивĕçтереççĕ. Питĕ меллĕ меслет. Манăн шухăшпа, бюджет мелĕпе пĕлў илекен студентсене валли те патшалăх вĕсемшĕн тăкаклакан укçа-тенке ĕçлесе татмалли йĕрке пулмалла, направленипе ĕçе яма тытăнмалла.

**— Всеволод Георгиевич, Чăваш патшалăх университечĕ чăваш ачисене паха пĕлў илме пулăшас тĕлĕшпе мĕнле ĕçлет?**

— 18 çул каяллах, ун чухне эпĕ инженерсен никĕс хатĕрлевĕн факультечĕн деканĕччĕ, ял ачисене хуларинчен кая мар пĕлў илме май туса парас шухăш çуралчĕ. Çак тĕллевпе республикăри кашни район центрĕнче аслă шкул умĕнхи хатĕрлев центрĕсем уçрăмăр. Унта университет преподавателĕсем шкул ачисемпе тĕп предметсемпе - математикăпа, физикăпа, химипе, биологипе, ют чĕлхепе, ыттисемпе - хушма занятисем ирттереççĕ. 18 çул хушшинче çак центрсенче 30 пине яхăн шкул ачи пĕлў илнĕ. Чылайăшĕ çĕршыври аслă шкулсене, çав шутра пирĕн университета, вĕренме кĕнĕ.

Çак ĕçĕн витĕмĕ пысăк. Пĕрремĕшĕнчен, шкул ачисен пĕлў шайĕ ўсет, ку ял çамрăкĕсенчен чылайăшне аслă шкула кĕме çул уçса парать. Танлаштарма: 1990 çулта университетăн пĕрремĕш курсĕнче вĕренекен студентсен 19 процентчĕ кăна ялтанччĕ, халĕ - 51-53 процент. Ку - ялпа хула ачисене социаллă пĕр танлăхпа тивĕçтернин палли. Тепĕр тĕрлĕ ĕç - ытти регионти чăваш диаспорипе çыхăну тытни. Тюмень, Ульяновск облаçĕсемпе, Тутарстанпа, Пушкăртстанпа, ытти регионпа тунă килĕшўсемпе специалистсене тĕллевлĕ хатĕрлетпĕр. Тутар, Пушкăрт республикисенче, Ульяновск облаçĕнче пирĕн представительствăсем ĕçлеççĕ. Вĕсене, тĕпрен илсен, çак

регионсенче пурăнакан чăваш ачисене Чăваш патшалăх университетне кĕме пулăшас тĕллевпе йĕркеленĕ. Тутарстанри Анат Камăри чăваш наци гимназийĕпе чылай çул çирĕп çыхăну тытатпăр. Пирĕн профессорсемпе преподавательсем унта вĕренӳ çулĕ тăршшĕпех лекцисем вулама кая-кая килеççĕ. Гимназирен университетăн тĕрлĕ факультетне çулсерен 10-15 çамрăк вĕренме кĕрет.

**— Пĕрремĕш курса паян мĕнле çамрăксем килеççĕ? Патшалăхăн пĕрлехи экзаменĕ вĕсен пĕлĕвне тĕрĕс хаклать-и?**

— ППЭ идейи лайăх. Ăна Раççейри мĕн пур вĕренекен пĕлĕвне объективлă, никама пăхăнмасăр, пахалăхлă хаклас тĕллевпе йĕркеленĕ. Çак виçĕ паллăна пĕтĕмпех пурнăça кĕртес пулсан ППЭне никам та хирĕçлемĕччĕ. Анчах пурнăç теорирен кăткăсрах-çке. Патшалăхăн пĕрлехи экзаменне йышăнакан комисси объективлă пулсан та пурте пĕр-пĕринпе çыхăннă, чылайăшĕ пĕр-пĕрне пĕлет. Çак условисенче ППЭн виçĕ пахалăхне шайлашура тытма йывăр. Пирĕн республикăра Патшалăхăн пĕрлехи экзаменĕнче вĕренекенсен пĕлĕвне объективлă, никама пăхăнмасăр, пахалăхпа хаклас тĕлĕшпе питĕ нумай тунине палăртса хăвармаллах. Анчах вĕренӳ пахалăхĕ чакса пынине те асăнмалла. Хăш чухне шкул программи тăрăх вĕрентесси ППЭне хатĕрленессине çаврăнать. Ку вара логика шухăшлавне чухăнлатать. Юлашки çулсенче пĕрремĕш курс студенчĕсенчен чылайăшĕ математикăри ансат япаласене те чухламаннине хăнăхса пыратпăр теме те пулать. Пуринчен те ытларах шкул пĕтерекен çамрăксем тĕрĕс çырма, хăйсен шухăшне уçăмлă палăртма пултарайманни тĕлĕнтерет. Ман шухăшпа ку вĕсем кĕнеке пачах вуламаннипе е питĕ сахал вуланипе çыхăннă. Эпир шкулта вĕреннĕ чухне пĕлĕвĕн тĕп çăл куçĕ кĕнеке пулнă. Халĕ унран илĕртсе каякан нумай: компьютер, телевизор...

**— Лару-тăрăва лайăхлатма пулать-и?**

— Вĕрентекен статусне ӳстермелле. Çак категорири çынсен ĕçне патшалăх, общество тивĕçлипе хакламанни вĕрентӳ пахалăхне те витĕм кӳрет. Учителĕн те, аслă шкул преподавателĕн те шалу питĕ пĕчĕк. Çавна пула кадрсен ыйтăвĕ, уйрăмах техника специальноçĕсемпе, çивĕчленме пултарать. Ăслă, пултаруллă çамрăксем тĕрлĕ фирма-компанире аслă шкул преподавателĕсенчен чылай ытларах ĕçлесе илеççĕ.

**— Университетра ĕçлекенсен шалăвне ӳстерме палăртатăр-и?**

— Пĕлтĕрхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен пуçласа çĕршыври чылай бюджет организацийĕ пекех университет та ĕçшĕн çĕнĕлле тӳлемелли тытăм çине куçрĕ. Анчах унта шута илмен хăш-пĕр çитменлĕхе асăрхарăмăр. Аслă преподаватель шалăвĕ тирпейлӳçĕ шалăвĕпе танлашни тĕрĕс мар паллах. Çавна май кăçал çĕнĕлле тӳлемелли тытăма пурнăçа кĕртекен ĕç ушкăнĕпе пĕрле унта хăш-пĕр хушăмсем кĕртрĕмĕр. Кĕскен каласан ĕçченĕн должноç шалăвĕ çумне хушакан хавхалантару тӳлевĕсем икĕ пайран тăракан пулаççĕ. Яланхи - сахалтан та çулталăка, улшăнса тăраканнине ĕçри ӳсĕмсене кура кашни уйăхра çирĕплетеççĕ, вăл шалуран темиçе хут пысăкрах пулма пултарать.

**— Çапах юратнă ĕçе укçапа кăна виçейĕн-ши?**

— Çук паллах. Нимĕнрен те ытларах çĕннине тĕпчес, пĕлес, ӳсес, аталанас ăнтăлупа пурăнакан çын та сахал мар. Ку - вĕсен пурнăç йĕрки. Аслă тата вăтам вĕренӳ тытăмĕ çакăн пек çынсем çинче тытăнса тăрать. Нумай пулмасть «Çулталăк учительне» чысласа ирттернĕ уява хутшăнтăм. Ăслă, ăста, çамрăк, хитре вĕрентекенсене курма питĕ кăмăллă пулчĕ. Пултаруллăскерсене укçаллăрах ĕçе те илĕччĕç. Анчах вĕсемшĕн чи хакли - ачасем, педагогика, тăван шкул.

**— Манăн шухăшпа Агаковсен ĕç династине те çак йыша кĕртме пулать.**

— Атте Георгий Афанасьевич вырăс чĕлхипе литературин учителĕ пулнă, шел, эпĕ çиччĕре чухнех çĕре кĕчĕ. Асаттен тăванĕ Яков Ананьевич /Чăваш халăх писателĕн Леонид Агаковăн ашшĕ/ шкулта вĕрентнĕ. Аппа та вырăс чĕлхипе литератури учителĕ пулнă. Анне Мария Васильевна 40 çул пуçламăш классемпе ĕçлерĕ, ЧАССР Аслă Канашĕн депутачĕ те пулчĕ. Питĕ ĕçчен, çĕннине пĕлме ăнтăлакан çын. Халĕ вăл 91 çулта пулин те вĕренме, аталанма тăрăшать.

**— Всеволод Георгиевич, сире кĕнекепе ачаран туслашма Л. Я. Агаков писатель произведенийĕсем те витĕм кӳнех ĕнтĕ...**

— Манăн аттепе Леонид Яковлевич икĕ сыпăкри тăвансем. Вĕсем пĕрле ӳснĕ, питĕ туслă пулнă. Леонид Яковлевич пирĕн пата час-часах пырса çӳретчĕ. Эпĕ вăл çыравçă

хушма ят илнĕ пирки мĕн каланине лайăх ас тăватăп. «Хамăн хушаматран та, произведенисенчен те вăтанмалли çук, мана хушма ят кирлĕ мар», - тетчĕ. Çирĕп кăмăллă, числăха хаклакан, тӳрĕ калакан, шӳтлеме юратакан çынччĕ. Леонид Агаков чăваш ачисемпе çамрăкĕсемшĕн çăлтăр пулнă. Пин-пин ача унăн Тăван çĕршыва юратма, çынлăха хаклама вĕрентекен произведенийĕсене вуласа ӳснĕ. Паллах, эпĕ те унăн кĕнекисене сывлăш çавăрмасăр тенĕ пек вуланă, вăл каланисене тимлесе итленĕ. Юратнă кĕнекесен шутĕнче - Э.Л.Войничăн «Пăван» романĕ те. Ăна шкулта вĕреннĕ чухне чăвашла вуланăччĕ, университет пĕтернĕ хыççăн оригиналра акăлчанла вуласа тухрăм. Юратнă роман паян та манăн ĕç пӳлĕмĕнчи çӳлĕк çинче. Математикăпа ăслăлăх ĕçĕсене вулатăп, вĕсем шухăшсене йĕркене кĕртме пулăшаççĕ. Паллă çынсен шухăшĕсен пуххисене, Омар Хайямăн сăввисене час-часах алла илетĕп. Хăш чухне чуна уçса трактатсем, афоризмсем çыратăп. Кĕнеке пурнăçа пуянлатать, ăс-тăна аталантарать. Шел, паян çакна ачасемпе çамрăксенчен чылайăшĕ ăнланмасть.

**— Кăмăллă та тĕплĕ калаçушăн тав сире, Всеволод Георгиевич.**

**Вулакансене университет пурнăçĕпе паллаштарсах тăрăпăр. Ректорпа хăйĕнпе те çыхăнма пулать. Вăл халăх валли хăйĕн электрон ешчĕкне — agakov@chuvsu.ru Данный адрес e-mail защищен от спам-ботов, Вам необходимо включить Javascript для его просмотра. — уçнă. Унта университетăн www.chuvsu.ru сайчĕ урлă кĕрсе кирек кам та аслă шкул пирки ыйту пама пултарать.**

**Алина ЛУКИЯНОВА.**
**Хыпар, 111 (25516) , 2010.06.03.**